**Шухăш**

# ЧĂВАШ ТĔРРИ – ЧĂВАШШĂН ЧУН КĔВВИ

Çĕр çинче пурăнакан кашни халăхшăн хăйĕн мĕн сĕм авалтан йăхран йăха куçса пыракан йăлийĕрки чи хакли, чи сумли, чи пĕлтерĕшли. Чăваш халăхĕшĕн те çавах. Аталаннăçем сынсем пин тĕрлĕ кĕпе-тум, тĕрлĕ эрешсемпе тĕрĕсем, сават-сапа, апат-çимĕç туса илмелли хатĕрсем шутласа кăларнă, пурăнмалли кил-çурт туса лартнă, хăйсен пурнăçне çăмăллатас шутпа тискер чĕрчунсене алла вĕрентнĕ. Ăçтан килнĕ эпир? Ăçта каятпăр? Мĕн тĕллевпе пурăнатпăр? Мĕншĕн тăрăшсах хамăр йăха малалла тăсатпăр, асатте-асаннерен вĕсем пĕлнине вĕренсе юлатпăр, ачамăрсене хамăр пек пурăнма вĕрентетпĕр? Ăçта пырса чарăнапăр?

Апла-и, капла-и, шутласа кĕрсе каятăн та пурнăçран пылакки нимĕн те çуккине ăнланатăн, хăвăн халăхупа пĕрле малалла утнине, хăвăн тăван чĕлхӳпе калаçнине, хăв шухăшлă çынсем пĕçерне апата пĕрле ларса çинине, хăв çуралса ӳснĕ халăх кĕвви-юррине итленине, хăв туйăмлă çынсем эрешлесе çĕленĕ кĕпене тăхăннине нимĕн те çитменнине чухлатăн.

Чăваш халăхĕ ламран лама хăварнă чăваш кĕпи-тумне курсан, тухья, мăй çыххи, тевет, хушпу алла тытсан, тем тĕслĕ сăраллă çипсемпе тĕрленĕ питшăллисемпе алшăллисене, ача кипкисене, качча кайнă вăхăтра пĕркенмелли çивиттисемпе пĕркенчĕксене, чун-чĕререн савакан çын валли çеç тĕрлесе ăсталанă тутăрсене тĕмсĕлсе тинкерсен, чунра ăнлансах çитеймен техĕмлĕ чăмакка пăчăртанса ларать, пыр тĕпĕнче темĕн пылаккăн йӳçеккĕн кăтăклать, сисмесĕрех куçран тап-таса куççуль тумламĕсем пăчăртанса тухаççĕ. Сăрнайпа, шăпăрпа, кĕслепе, купăспа, кавалпа янракан чăваш кĕввине илтсен вара чун тата та çемçелсе каять. Çав самантсенче хам мĕн тери телейлĕ иккенне пĕтĕм чун хавалĕпе туйса илетĕп. Хăв питĕ пултаруллă, тăнăçлă, тараватлă, асама хăй курма пĕлекен çеç мар, тепĕрне курма вĕрентекен чăваш халăхĕн пĕр пĕчĕк пайĕ иккенне чĕре хĕлĕхĕ таран ăнкарса илетĕн.

Уйрăмах мана шур пир çине тĕрленĕ чăваш тĕрри антăхтарса ярать. Мĕнле ăстаçă хĕрсемпе хĕрарăмсем шутласа тупнă-ши çак меслете пин-пин çул каялла, çак рунă иероглифĕсем евĕр вуланакан паллăсене, символсене? Тен, тĕрре арçынсем ăсталанă? Мĕнлерех чунлă тата чĕреллĕ пулнă-ши вĕсем, пирĕн мăн-мăн-мăн асаннесемпе кукамайсем? Еплерех юратнă пулĕ вĕсем хăйсен мăшăрĕсене, ачисене, тăванĕсене? Çав çепĕç те ачаш, илемлĕ те черчен юратăва эпĕ тĕрĕсенчи кашни çекĕлтех, кашни куçрах чунăн шалти куçĕпе куратăп. Чăнах та, чунра таса туйăм пулмасан тĕрĕсем çак сутă тĕнчене епле çуралчăр?

Ĕлĕк-авал пурăннă хĕрсем хăйсем валли, чун савнисем валли, качча каяс умĕн ятарлă çи-пуç хатĕрленĕ чух юрату вучĕпе хĕмленсе никам курман тĕрĕсем шутласа кăларнă. Çав тĕрĕсенче вĕсем хăйсен вăрттăн шухăшĕсене, сăмахпа калама вăтаннă туйăмĕсене уçăмлăн кăтартнă. Пĕрпĕринпе ăмăртса, пĕринчен тепри лайăхрах та чаплăрах тĕрлеме тăрăшнă чăваш пикисем. Ача çуратнă хĕрарăм чун тĕпренчĕкĕн кипкисене, хăнана кайнă вăхăтра ача чĕркемелли çивиттисене тĕрленĕ чух чăн–чăн амăш, пурнăç парнелекен хĕрарăм туйăмне тĕрре хывнине эпĕ, паянхи хĕрарăм, амалăх шайĕнче туйса тăратăп. Çав тĕрĕсенче хăйсем хăш тăрăхра пурăннине, таврара ӳсекен йывăçсемпе тĕмсене, чечексене, курăксене, чĕрчунсемпе тискер кайăксене, вĕçен кайăксене сăнарласа хăварнă авалхи ăстаçăсем.

Чăваш мĕн ĕлĕкрен çутçанталăка питĕ те çывăх пулнине куç кĕретех куратăн. Çутçанталăк вăйĕ, ăсĕ умĕнче пуç тайнине асăрхатăн. Çутçанталăк хăвачĕ чăваша тĕлĕнтернĕ, хăйпе тан утма чĕннĕ. Вырăс-чĕрлĕхе те питĕ хисепленĕ чăваш. Лашасем, ĕнесем, сурăхсем, йытăсем унăн шăпине чылай çăмăллатнă. Хăйне пурнăçра пулăшса пыракан выльăх-чĕрлĕх валли чăваш хĕрарăмĕ тĕрĕре самай нумай вырăн уйăрнă, символсемпе кĕлеткисене тĕрленĕ. Хăйне шывпа тивĕçтерекен юханшывсемпе çăлкуçсем валли те вырăн тупăннă унăн тĕррисенче. Тинĕс хумĕсем валли те уйрăм паллăсем тупнă. Хăйне хупăрласа, хӳтĕлесе тăракан тăвата кĕтеслĕ тĕнче валли те ятарлă паллăсем шыранă. Хальхи çырулăх патне пĕчĕк-пĕчĕк утăмсемпе утса çырулăха шутласа тупиччен ĕлĕкхи чăвашсем хăйсен шухăш-кăмăлне çекĕлсемпе шурă тата улача пир çине ӳкерчĕк урлă тĕрлесе хăварнă. Паянхи тĕпчевçĕсем пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем мĕн çинчен ĕмĕтленнине, мĕне шаннине, мĕн шутланине, çак аслă тĕнчене еплерех курнине тата ăнланнине тĕрĕсем урлă тĕпчесе тишкереççĕ.

Тĕрĕсем çине тинкеретĕн те чăваш хĕр-упраçĕн тĕс туйăмĕ çивĕч те пархатарлă пулнине те асăрхатăн. Авалхи чăваш пикисем хĕрлĕ, сарă, шурă, симĕс, кăвак тĕссене ытларах кăмăллаççĕ. Маларах асăннă тĕссем пурте пурнăçпа çут–çанталăк тĕсĕсем. Хĕрлĕпе сарă тĕссем – хĕвелпе, илемпе тата çутăпа çыхăннă, кăвак, симĕс тĕссем ытларах тӳпене, юханшывсене, йывăç-курăка, шурă вара

пĕлĕте, шурă сĕте аса илтерет. Чăваш яланах пурнăçа питĕ юратнă, хакланă, нумай ача-пăча çуратса хăйĕн йăхне тăснă. Ахальтен мар эпир Раççейре халăх йышĕпе чылай малта. Чăваш яланах сĕтлĕ кўлĕре ишесшĕн пулнă, таса та çутă çăтмахра рехетленме ĕмĕтленнĕ. Пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем, пирĕнпе танлаштарсан, чăнах та, тасалăхра пурăннă, вĕсем ĕçĕ-хĕлĕпе те, тĕллевĕсемпе те çутçанталăка çывăхарах пулнă. Çутçанталăк саккунĕсене пăхăнса пурăннă. Вĕсем таса сывлăшпа сывланă, таса апат-çимĕç çинĕ, синтетика мар, пир кĕпе тăхăннă. Хăйсен хыççăн тирпейлесе пуçтарса Киреметпе Çутçанталăка пуç çапнă, чўк тунă. Тĕрĕри хура тата хăмăр тĕссем те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Хура тĕс – çĕр е тăпра палли. Мĕн пур апат-çимĕçе, йĕри-таврари хăтлăха пире тăпра парать. Хăмăрри вара – йывăç вулли, турачĕ, кайăккĕшĕк, чĕрчун тĕнчин тĕсĕ. Чăваш тĕррисенче шалти кĕвĕлĕх, килĕшўлĕх витĕр курăнса тăрать. Чăваш тĕрринчи тĕссем пĕр-пĕрне чăрмантармаççĕ, пĕр-пĕрин çумне çĕленнĕ тĕслĕ çекĕлсемпе куççем пĕр-пĕрне илемлетеççĕ çеç. Кашни тĕрĕ, тарăннăн шутласа кайсан, хăйне евĕрлĕ пурнăç ўкерчĕкĕ, хăйне евĕрлĕ поэма, сăвă, кĕвĕ. Пĕрпĕр тĕрĕ тĕрленĕ вăхăтра кашни хĕрарăм хăйне евĕрлĕ ăстаçăўнерçĕ пулса тăнă. Ĕлĕк-авал хĕрупраççемпе хĕрарăмсем çемьесерен тĕрĕ шăрçаланă. Мĕн тери пултаруллă пулнă вĕсем! Çав ăсталăха пире парса хăварнă мăн-мăн-мăн асаттесемпе асаннесем. Çав пултарулăх пире юн, ген, калаçу урлă куçнă.

Татьяна Шаркова тĕрĕçĕ-ўнерçĕпе паллашнă хыççăн эпĕ хамшăн чăваш тĕррин асамлă тĕнчине тепĕр хут уçрăм. Татьяна мана тĕрĕн вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарчĕ. Авалтан упранса юлнă тĕрĕллĕ кĕпесене, масмаксене, алшăллисемпе питшăллисене, сĕтел çиттисене алăра тытса курса савăнма май туса пачĕ. Тавах ăна уншăн. Пĕрре мар эпир, чăваш хĕрарăмĕсем, тĕрĕ ăстисен уйрăмлăхĕсем çинчен сăмах çăмхине сўтрĕмĕр. Чăтаймарăм, унăн ăсталăхне хаклаcа сăвă та çыртăм. Татьянăн аллисем йĕппе çиппе асăрханса тытса çĕнĕ ўкерчĕк пуçланине те курнă эпĕ. Çын каласан ĕненмĕ те. Сехечĕ-сехечĕпех Татьянăпа телефонпа калаçнă. Манпа сăмахланă самантра Татьяна пĕр вăхăтрах икĕ ĕç тăватчĕ. Хăй мĕн курни-илтнине сăмахпа пĕлтеретчĕ, çав вăхăтрах тĕрĕ тĕрлетчĕ. «Татьяна Шарковăн висĕ хĕвелĕ» кĕнеке ман чунпа алă витĕр тухрĕ тесен те суя пулмасть пулĕ. Йывăрлăха кĕрсе ўкнĕ Татьяна пулăшу ыйтсан эпĕ пĕр тăхтаса тăмасăр компьютерпа ăна халалланă статьясемпе сăвăсене пичетлерĕм, кĕнекене майлаштарнă чух сĕнўсем патăм. Çăмăлпа кун çути курмарĕ унăн кĕнеки. Йывăр самантсенче шанчăка çухатмалла маррине пĕрре мар ĕнентертĕм. Çак кĕнеке чăваш тата ытти халăхсем патне çитме пултарнăшăн эпĕ питĕ хĕпĕртетĕп. Мĕншĕн тесен çак кĕнеке чăваш чунне тата та пуянлатать, хитрелетет, аслăлатать. Хамăр чăваш пулнипе мухтанма май парать. Тĕрĕсемпе çыхăннă кĕнекесем пирĕн ахаль те сахал. Çак çĕр çинче хамăра хамăр сыхласа хăварас тесен пирĕн ачамăрсем патне мĕн авалтан упранса юлнă йăлайĕркене çитермелле. Чăваш чунĕнче чăн-чăн чăвашлăх тĕп шăнăр пулса тăтăр. Унсăрăн пирĕн малашлăх çук. Питĕ шел, курмăша-илтмĕше перетпĕр – çулсерен вырăсланса пыратпăр, хамăрăн çирĕп тымарсене çĕртетпĕр.

Татьяна вара чăвашлăх ĕçне кашни çекĕлĕпе малалла тăсать. Асатте-асаннесенчен упранса юлнă ăсталăха хăй ăшне илсе çирĕплетет, чĕрĕ маçтăрсенчен вĕренсе хăйĕн пултарулăхне пурнăç сунталĕ çинче туптать. Тĕрĕ тĕрлеме вĕреннипе çеç çырлахмасть вăл. Хăй те чĕринче çĕнĕрен те çĕнĕ ўкерчĕксем тĕвĕлесе шурă пир çине куçарать. Унăн тĕрĕ-ўкерчĕкĕсем çинче эпир этем, ўсентăран, чĕрчун, кайăк кĕлеткисене витĕр куратпăр. Татьяна ытларах хĕрлĕ тĕспе усă курать. Мĕншĕнне те пĕлетĕп. Хĕрлĕ тĕс вăл – юрату тĕсĕ. Пĕтĕм пурнăç вара юрату çинче çеç тытăнса тăрать. Татьяна вара питĕ туйăмлă хĕрарăм. Чăн-чăн юрату хăватне туйса курнă хĕрарăм. Арçынна юратса çак тĕнчене çĕнĕ пурнăç панă, хĕрача çуратса хăйне малашлăхра тăснă. Хĕрлĕ тĕс вăл – хĕвел тĕсĕ. Хĕвел сўнсен – пурнăç сўнет. Ахальтен мар Раиса Сарпи поэтесса Татьяна Шарковăна халалланă сăвăра çапла çырать: «Санăн тĕррўнте – аваллăх, курăнать çырулла паллă, санăн тĕррўнте – пуласлăх, ялкăшать хĕвеллĕ ăслăх». Татьяна Шаркова чăваш пурнăçĕнчи питĕ пĕлтерешлĕ символсем – юманпа хыр валли те хăй ўкерчĕкĕсенче вырăн тупнă. Чăвашсăр – юман çук. Юмансăр – чăваш çук. Юман – арçынлăх палли. Арçынра вара тĕрĕçĕ-ўнерçĕ çирĕплĕх, тăнăçлăх, ĕçченлĕх, çемье тĕрекне курать. Çак пĕтĕм чăнлăха Татьяна хĕрарăм ăсĕпе тата интуици шайĕнче туйса тăрать. Хăйĕн фантазине вăл çăлтăрсем патнех вĕçтерет. Хăй суйласа илнĕ çула чечексемпе тата асамат кĕперĕпе илемлетсе малалла утать. Хăй çеç шутласа, чун тĕпĕнчен шăрантарса кăларнă тĕнчене пире, куракансене, чĕнет. Панносенче тĕрĕçĕўнерçĕ аваллăх патне çĕнĕрен те çĕнĕрен тавăрнать. Мĕн ку? Ман шутпа, пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем пирĕнпе, хăйсен мăнукĕсемпе, ĕмĕрсем урлă юн шайĕнче калаçни, пире хăйсем çинчен мантарасшăн пулманни. Эпир çак çутă тĕнчене вĕсен юратăвĕ урлă килнĕ. Вĕсем пирĕн çинчен шутланах, ахальтен мар ĕнтĕ Киреметре кĕлĕ вуласа, Аслă вăйсенчен пурăнма ырлăх-сывлăх ыйтса, пуçĕсене тайса тĕрĕллĕ алшăллисемпе сурпансене юман тураттисем çине çыхнă. Пирĕн Аслă Турăсем – Çут çанталăк Туррисем – хăйсем çинчен пире Татьяна Шаркова тĕррисем урлă аса илтерсех тăраççĕ. Мĕншĕн тесен аваллăха мансан чăвашсен пуласлăхĕ вилет. Çук, çук, этем йăхĕ вилмĕ, чăвашлăх çеç ĕмĕрлĕхе куçне хупĕ. Татьяна Шаркова çак вутхĕме, тĕнче пысăкăш вăя туйса тăрать, хальхи çынсем патне тĕрĕ урлă илсе çитерет. Тавах Татьянăна уншăн.

**Альбина ЮРАТУ.**